**9-мӗш класс пӗтерекенсемпе чӑваш чӗлхипе экзамен тытма хатӗрленмелли материал**

**2-мӗш вариант**



Изложени тексчӗ

Учитель ӗҫӗ пархатарлӑ та сӑваплӑ. Ача ҫуралсанах унӑн пӗрремӗш вӗрентекенӗ амӑшӗ пулса тӑрать. Шкулти вӗрентекене вара иккӗмӗш анне теҫҫӗ. Кашни ачан ӑс-тӑн ӳсӗмӗнче, тавра курӑм аталанӑвӗнче вӗрентекенӗн тӳпи питӗ пысӑк. Пӗчӗк ачаран пулас инженер е врач, пуҫлӑх е ӑсчах ҫитӗнтересси ҫӑмӑл мар. Хӗр ачасемпе ывӑл ачасем пурнӑҫ ҫулӗ ҫине тухмалли ӑс-тӑнпа ӑсталӑха шкулта кӑна илме пултараҫҫӗ.

Вӗрентекен пуринчен те ырӑ, пултаруллӑ, хисеплӗ, кирек кама та ӑнланма тата темӗнле йывӑр ыйтӑва та тивӗҫлӗ татса пама пултаракан ҫын вӑл. Ачана тӑван амӑшӗ пекех савса кӑмӑллать. Ҫӗр ҫинче мӗн пур ырри вӗрентекенрен тухать. Вӗрентекен никама та усал сунмасть, пурне те чипер ача тӑвасшӑн ҫунать. Хӑйӗн чун пуянлӑхӗпе ҫамрӑксене те ҫынсене юратса хисеплеме, ӗҫчен те йӗркеллӗ ҫын пулма вӗрентет.

Учитель вӑл — пур ачана та, пур ҫынна та кирлӗ ҫын. Кашни вӗрентекенех хӑйӗн вӗренекенӗсем сапӑр та хастар чун-чӗреллӗ ҫынсем пулччӑр тесе тӑрӑшать, ырӑ шухӑш-ӗмӗтпе пурӑнать. Вӑл кашни ачан пурнӑҫӗпе, савӑнӑҫӗ-хуйхипе, терт-нушипе пурӑнать. Кашни вӗренекене хӑй ачине юратнӑ пек юрататъ, йывӑр вӑхӑтра пулӑшать, унпа пӗрле савӑнать те, кулянать те. Кашни вӗрентекен хӑйӗн пурнӑҫне пархатарлӑ ӗҫпе иртт ерет. Вӗсем чӑннипех те мухтава та, хисепе те тивӗҫлӗ.

## 1-мӗш пай

**1** ***Текста тимлӗ итлӗр те ӑна ҫывӑх изложени ҫырӑр.***

Изложенири сӑмах шучӗ 70-тен кая пулмалла мар.

Изложение тирпейлӗ, уҫӑмлӑ ҫырӑр.

## 2-мӗш пай

**2-8-мӗш ӗҫсен хуравӗ сӑмах (темиҫе сӑмах) е цифрӑсен йӗрки пулма пултарать.**

**2** ***Синтаксис тишкерӗвӗ.***

Текста тӗплӗ, васкамасӑр вуласа тухӑр.

*(1)Шурӑ юр ҫинче икӗ шурӑ хур хӑрах уран тӑрать.(2)Куҫ хупанкине хупнӑ хур ами тӳлеккӗн тӗлӗрет. (3)Аҫи те хушӑран куҫне хупкаласа тӗлӗрем пекки туса илет. (4) Ҫав вӑхӑтрах тавралӑха сыхлать. (5)Вӑл сӑмсине ҫунатти ӑшӗнчен кӑларса пуҫне чалт! ҫӗклет те ун-кун ҫаврӑнса пӑхать, юр тулнӑ тавралӑха хӑяккӑн чалӑша-чалӑша тӗпчет.*

Предложенисен грамматика никӗсне тӗрӗс палӑртнӑ вариантсене кӑтартӑр.

1) хур *тӑрать* (1-мӗш предложени);
2) *куҫ тӗлӗрет* (2-мӗш предложени);
3) *куҫне туса илет* (3-мӗш предложени);
4) *тавралӑха сыхлать* (4-мӗш предложени);
5) *вӑл ҫӗклет, пӑхать, тӗпчет* (5-мӗш предложени).

**Хуравӗ: ___________________________**

**3** ***Пунктуаци тишкерӗвӗ.***

Чӑрӑну палли лартмалли вырӑнсене кӑтартакан цифрӑсене ҫырӑр.

*Пирӗн тавралӑх авӑн уйӑхне (1) тин ҫеҫ кӗр тырри акса хӑварнӑ (2) вӗҫӗ-хӗррисӗр анасемпе(3) улмисем йывӑррине пула (4) тураттисене уснӑ улмуҫҫисемпе (5) сип-симӗс каюллӑ улӑхҫаранпа (6) тӗл-тӗллӗн шупкалнӑ-хӗрелнӗ вӑрмансемпе (7) тата садсемпе кӗтсе илет.*

**Хуравӗ: ___________________________**

**4** ***Синтаксис тишкерӗвӗ.***

*Ҫурт умӗнчи пилешӗн хӗрлӗ ҫырлисем* сӑмах майлашӑвӗн тӗп компонентне ҫырӑр.

**Хуравӗ: ________________________**

**5** ***Орфографи тишкерӗвӗ.***

**Паллӑ тунӑ сӑмахсене мӗнле ҫырнине тӗрӗс ӑнлантарнӑ хурав варианчӗсен номерӗсене ҫырӑр.**

1) ***электрохунар*** – мӑшӑр сӑмахсене пӗрле ҫырмалла;
2) ***ӑс-тӑн*** – икӗ хут калакан сӑмахсене дефиспа ҫырмалла;
3) ***алӑ ҫул*** – япала ятне ӑнлантаракан хисеп ячӗсенче пӗр хупӑ сас палли ҫырмалла;
4) ***итле-ха*** – *ха* междометие яланах дефиспа ҫырмалла*;*
5) ***Пӗтӗм тӗнчери хӗрарӑмсен кунӗ*** – уяв ятӗнче малтанхи сӑмахне ҫеҫ пысӑк сас паллинчен пуҫласа ҫырмалла.

**Хуравӗ: ________________________**

**Текста вуласа тухӑр та 6-9-мӗш ӗҫсене тӑвӑр.**



(1) Юратнӑ чӑн-чӑн вӗрентекен… (2) Унӑн ырӑ та ӑслӑ сӑмахӗсем халӗ те хӑлхара янӑранӑ пек туйӑнаҫҫӗ. (3) Ӑна сехечӗ-сехечӗпе итлесе лараттӑмӑр. (4)Галина Спиридоновна пирӗншӗн пурне те пӗлекен, пурне те пулӑшакан ҫын пулнӑ. (5)Вӑл пире вулама, ҫырма кӑна мар, тӗрӗс те йӗркеллӗ пурӑнма, пӗчӗкрен лайӑх ҫын пулма вӗрентетчӗ. (6)Нихӑҫан та пире усал каламан. (7)«Ҫӗнни йывӑррӑн килет, ачасем, уншӑн кӗрешмелле», - тетчӗ пирӗн юратнӑ вӗрентекен.

(8)Галина Спиридоновнӑн сӗрме купӑс пурччӗ. (9)Ун кӗввипе пӗрле хавхалануллӑ юрӑсем юрлаттӑмӑр. (10)Кунсерен пурнӑҫ ҫине ҫӗнӗлле пӑхма вӗренсе пытӑмӑр.(11) Вӗрентекен ҫакна туйса тӑратчӗ, апла пулин те лӑпланса ларма хушман вӑл пире.

(12)Юратнӑ вӗрентекене эпир кирек хӑҫан та ырӑпа асӑнма тивӗҫ. (13)Вӑл тӑван ҫын пекех пире ҫывӑх туйса тӑнӑ. (14)Вӑл пире ҫӗнӗ пурнӑҫшӑн кӗрешме, ӑнланманнине ӑнланма, пӗлменнине пӗлме, халӑхпа тан утма вӗрентнӗ. (15)Ҫакӑншӑн тайма пуҫ ӑна. *(111 сӑмах)*

*(А.Сымокин ҫырни тӑрӑх)*

**6** ***Текст содержанийӗн тишкерӗвӗ.***

**Текст содержанийӗпе хӑш предложенисем тӳр килеҫҫӗ?**

1) Юратнӑ вӗрентекен.
2) Ӑна сехечӗ-сехечӗпе итлесе лараттӑмӑр.
3) Вӑл пире вулама, ҫырма кӑна мар, йӗркеллӗ пурӑнма, пӗчӗкрен лайӑх ҫын пулма вӗрентетчӗ.
4) Кунсерен пурнӑҫ ҫине ҫӗнӗлле пӑхма вӗренсе пытӑмӑр
5) Ҫакӑншӑн тайма пуҫ вӗрентекене.

**Хуравӗ: ________________________**

**7** ***Илемлӗх мелӗсене тишкерни.***

**Танлаштаруллӑ предложени(сен) номерӗсене кӑтартӑр.**

(1) Унӑн ырӑ та ӑслӑ сӑмахӗсем халӗ те хӑлхара янӑранӑ пек туйӑнаҫҫӗ.
(2) Галина Спиридоновнӑн сӗрме купӑс пурччӗ.
(3) Кунсерен пурнӑҫ ҫине ҫӗнӗлле пӑхма вӗренсе пытӑмӑр.
(4) Юратнӑ вӗрентекене эпир кирек хӑҫан та ырӑпа асӑнма тивӗҫ.
(5) Вӑл тӑван ҫын пекех пире ҫывӑх туйса тӑнӑ.

**Хуравӗ: ________________________**

**8** *Лексика тишкерĕвĕ.*

*Ырă* сăмахăн (2-мĕш предложени) антонимне текстра тупса çырăр.

**Хуравĕ: ________________________**

**2-8-мĕш ĕçсен хуравĕсене хурав бланкне куçарса çырма ан манăр. Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**

## 3-мĕш пай

**2-мĕш пайра вуланă текстпа усă курса 9.1, 9.2 е 9.3 ĕçсенчен пĕрне тăвăр. Хайлав çырас умĕн суйласа илнĕ ĕçĕн номерне палăртăр: 9.1, 9.2 е 9.3.**

**9.1. «Тавах Сире, вĕрентекен!»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра икĕ тĕслĕхпе (аргументпа) ĕнентерĕр: пĕр тĕслĕхне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илĕр.

Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

Тĕслĕхе предложение цитатăласа е унăн номерне кăтартса илсе парăр.

Сочинени калăпăшĕ 70 сăмахран кая пулмалла мар. Енчен те эсир экзаменра итленĕ тата вуланă текстсене ним улăштармасăр çырса илетĕр пулсан – ĕçĕре 0 балл лартса хаклаççĕ.

Сочинение тирпейлĕ, уçăмлă çырăр.

**9.2.** Вуланă текстра палăртнă **«Юратнă вĕрентекене эпир кирек хăçан та ырăпа асăнма тивĕç»** шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр.

Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ тĕслĕхпе (аргументпа) ĕнентерĕр.

Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

Тĕслĕхе предложение цитатăласа е унăн номерне кăтартса илсе парăр.

Сочинени калăпăшĕ 70 сăмахран кая пулмалла мар. Енчен те эсир экзаменра итленĕ тата вуланă текстсене ним улăштармасăр çырса илетĕр пулсан – ĕçĕре 0 балл лартса хаклаççĕ.

Сочинение тирпейлĕ, уçăмлă çырăр.

**9.3.** ***Чăн-чăн вĕрентекен*** сăмах майлашăвне Эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение уçса парăр. **«Кам вăл чăн-чăн вĕрентекен?»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тезис вырăнне Хăвăр панă определенипе усă курăр. Тезиса аргументлама икĕ тĕслĕхпе (аргументпа) усă курăр: пĕр тĕслехне вуланă текстран, теприне Хăвăр пурнăçăр опытĕнчен илĕр.

Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

Тĕслĕхе предложение цитатăласа е унăн номерне кăтартса илсе парăр.

Сочинени калăпăшĕ 70 сăмахран кая пулмалла мар. Енчен те эсир экзаменра итленĕ тата вуланă текстсене ним улăштармасăр çырса илетĕр пулсан – ĕçĕре 0 балл лартса хаклаççĕ.

Сочинение тирпейлĕ, уçăмлă çырăр.

**Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**